


# Çунатлă çул

Василий **ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

*Кун кĕнекинчен*

**1962 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 11-МĔШĔ.** Тĕлĕнмелле савăнăçлă хыпар илтрĕмĕр. Паян пирĕн çĕршывра виççĕмĕш космонавт тĕнче уçлăхне çĕкленчĕ. «Восток-3» сывлăш карапĕпе Совет Союзĕн гражданинĕ, пирĕн ентеш, чăваш ачи Андриян Николаев! Чĕрере ăшă туйăм тапса тăрать. Чăтаймарăм, чунтан хавасланса сăвă çыртăм.

Савăнатпăр эпир,
мухтанатпăр,
Тĕлĕнетпĕр совет
çыннинчен.
Ак каллех тӳпере улăп-
паттăр,—
Саламлатпăр ăна чĕререн.
Николаев вĕçет çĕр тавра,—
Кăтартать çĕнĕ çын хăватне.
Пирĕн аслă Тăван çĕршывра
Унăн ячĕ сӳнмест ĕмĕрне!

Ку сăвва «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ыран тухакан номерĕнче пичетлеме пулчĕç, паян каçхи передачăсем вăхăтĕнче радиопа вуласа пама ыйтрĕç.

Шупашкар урамĕсенче çынсем савăннипе пĕр-пĕрне чунчĕререн саламлаççĕ. Çулу телейлĕ пултăр, Николаев тăванăмăр!

**АВГУСТĂН 12-МĔШĔ.** Ирех тăтăм. Çывăрас килмест. Савăннипе куçăмран куççуль пĕрчисем юха-юха анчĕç. Пирĕн тăванăмăр, чăваш ачи Андриян Николаев космосра. Халĕ пĕтĕм тĕнче унăн паттăр ĕçĕ çинчен калаçать. Поэт ăна халалласа сăвă çырать, композитор юрă хывать. Рабочи ун ячĕпе вахтăна тăрать, колхозник хире тырпул пухма тухать. Çак улăп-паттăра Тăван çĕршыв чун-чĕререн хисеплесе саламлать, ырă çул сунать.

— Çĕр çинче тĕл пуличчен, Андриян тăванăмăр!

* * *

Радио çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ: паян 11 сехет те 02 минутра Совет Союзĕнче «Восток-4» космос карапĕ вĕçтерсе янă. «Восток — 4» карапа Совет Союзĕн гражданинĕ, Павел Романович Попович тытса пырать. Халĕ космосра чăвашпа украинец вĕçеççĕ. Çĕр çинче çеç мар, тĕнче уçлăхĕнче те халăхсен туслăхĕ ялкăшса тăнăн туйăнать. Чĕре ыйтнипе космонавтсене сума суса юрă çыртăм:

Салам сире, космонавтсем,
Асран кайми тусăмăрсем.
Эсир Тăван çĕршыв чысне
Çĕклерĕр çӳлĕ тӳпене.
Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче,
Эсир — патвар,
Эсир — хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.
Этем нихçан çитмен çĕре
Çул хыврăр, улăп-паттăрсем.
Илемлĕ, чаплă ĕмĕре
Пиллерĕр çĕнĕ сунатсем.
Телейлĕ çул сунать сире
Тăван çĕршыв—тăван анне.
Çитме чĕнет Ильич пире
Çӳле, сут çăлтăрсем патне.
Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче.
Эсир—патвар,
Эсир—хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.

**АВГУСТĂН 13-МĔШĔ.** Космосра икĕ улăп Андриян Григорьевич Николаевпа Павел Романович Попович вĕçеççĕ. Пĕтĕм тĕнче вĕсен хăюлăхĕнчен, вĕсен паттăрлăхĕнчен тĕлĕнет. Çак совет çыннисемпе мĕнпур планета савăнать, мухтанать. Эпĕ паян Шупашкарта Андриян Николаевăн пичĕшĕпе Иван Григорьевичпа, космонавта вĕрентнĕ учительпе Иван Михайловичпа курса калаçрăм. Хăйсем тĕлĕнмелле сăпайлă, ăшă кăмăллă çынсем.

— Андриян Григорьевич литературăна çав тери юрататчĕ. Вăл чăваш писателĕсен произведенийĕсене нумай вулатчĕ. Вăл сире те пĕлнĕ, эсир çырнисене те вуланă,— терĕ мана Иван Михайлович. Савăнăçпа тулнă чунăм тепĕр хут çуталса кайнăн туйăнчĕ.

**АВГУСТĂН 14-МĔШĔ.** Космосра çаплах Андриян Николаевичпа Павел Попович вĕçеççĕ. Икĕ ăмăрткайăк çӳлте, тӳпере. Вĕсем хамăр Тăван çĕршыв чысне çăлтăрсем патне çĕклеççĕ.

* * *

Радиопа космонавтсене халалланă сăвва вуласа патăм. Кăмăл хумханнипе, савăннипе паян та куçăмран куççуль пĕрчисем юхса анчĕç. Эх, пултараççĕ те пирĕн совет çыннисем!

**АВГУСТĂН 15-МĔШĔ.** Паян паттăр космонавтсем Андриян Николаевпа Павел Попович çĕр çине анса ларчĕç. Çак ырă хыпара пĕтĕм этемлĕх пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Космонавтсем çĕр çине аннă хыççăнах чăваш писателĕсем вĕсене Шупашкарти телевизор урлă саламларĕç. Илпек Микулайĕ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ, Уйăп Мишши хавхаланса хăйĕн сăввине вуларĕ. Эпĕ те икĕ улăп-паттăра чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламларăм.

— Паян, — терĕм эпĕ,— мана хамăрăн юратнă поэтăмăр Çеçпĕл Мишши çырнă сăвă йĕркисем аса килеççĕ:

Кăвар чĕре! Кăвар чĕрелле
Чăваш ачи, сассуна пар!
Тухсам кунта. Сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем! Эс пур—
çук мар.

Совет саманинче çĕршыври мĕнпур тăванла халăхсен ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле чăваш ачисем те хăйсен тивлетне, телейне тупрĕç, хăйсен янравлă сассине пачĕç, çĕршывшăн йывăр вăхăтра ялanах паттăрлăхпа хăюлăх кăтартрĕç. Акă халĕ пирĕн тусăмăр, тăванăмăр Андриян Николаев пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ, хăйĕн тантăшĕсемпе Юрий Гагаринпа, Герман Титовпа, Павел Поповичпа пĕрле космоса çул уçрĕ. Паян çав улăп-паттăрпа пĕтĕм тĕнче мухтанать.

Николаев Андриян,
Мухтанатпăр санпалан.
Эсĕ вĕçрĕн çĕр тавра,
Тухрăн улăп-паттăра.
Мĕнпур аслă халăхпа,
Гагаринпа, Титовпа,
Поповичпа кар тăрса
Эс çул хыврăн космоса.
«Çăлтăр витĕр çул
выртать»,
Тенĕ халăх авалтан.
Çав тӳпери çулпалан
Эсĕ килтĕн, Андриян!

* * *

Космонавтсем çĕр çине таврăннă ятпа Шупашкарти ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра Андриян Николаев амăшĕ, Анна Алексеевна сăмах каларĕ. Унăн чăвашла каланă сăмахне митинга пынисем çав тери пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

— Эпĕ хамăн ывăлăма космоса вĕçме ирĕк панăшăн Тăван çĕршыва, партипе правительствăна тав тăватăп,—терĕ вăл. Паттăр космонавт амăшне хулари ĕççыннисем, пионерсем чечек айне турĕç. Çак илемлĕ тĕлпулăва çырса кăтартма сăмах та çитес çук. Пирĕн çĕршывра этем çав тери пысăк хисепре!

**АВГУСТĂН 16-МĔШĔ.** Андриян Николаевичпа Павел Попович çинчен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнсе калаçать.

**АВГУСТĂН 18-МĔШĔ.** Кунĕпех çанталăк аван тăчĕ. Паян хамăр Тăван çĕршыв столици Мускав космонавт-геройсене Андриян Николаевпа Павел Поповича чыслăн кĕтсе илчĕ.

Ман пата Александр Алка, Кузьма Турхан, Николай Евстафьев писательсем килчĕç, пурте пĕрле Мускав улăп-паттăрсене — Николаевпа Поповича кĕтсе илнине телевизорпа пăхса лартăмăр. Хамăр савăннипе пурте çав тери хумхантăмăр. Хумханмасăр ăçтанха чăтан вара?

Акă, телевизорпа куратпăр: космонавтсене илсе килекен самолет Мускаври аэродрома анса ларчĕ. Кунта çĕршывăн паттăр ывăлĕсене кĕтсе илме халăх çав тери нумай пухăннă, партипе правительство руководителĕсем пур. Николаевпа Попович самолетран тухрĕç. Аэродром алă çупнипе кĕрлесе тăрать.

Паттăр космонавтсене партипе правительство руководителĕсем ăшшăн саламлаççĕ. Çакă тĕлпулăва пăхса ларнă чух

саваннипе пирĕн куçсенчен куççуль пĕрчисем юха-юха анчĕç.

Хĕрлĕ площадь. Космонавтсене чысласа иртерекен митингра Андриян Николаева сăмах параççĕ. Патвар та яштака чăваш ачи çĕршыв хушнă ĕçе чыслăн пурнăçлани çинчен калать, коммунистсен партине, Тăван çĕршыва хăйне пысăк ĕç шаннăшăн тав тăвать. Хĕрлĕ площадьре вĕçĕмсĕр космонавта саламласа кăшкăрни, алă çупни кĕрлесе тăрать...

Эх, пурнăç, пурнăç! Мĕнле эс илемлĕ! Ĕçле, тăрăш, кĕреш, вара эсĕ хăвăн телейне тупатăн!

## КУН КĔНЕКИНЧЕ—КОСМОНАВТПА ТАТА УН ТĂВАНĔСЕМПЕ ТĔЛ ПУЛНИСЕМ...

1963 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 12-МĔШĔ. Эпĕ республикăри пульницăра выртатăп. Паян пирĕн патăмăрта Андриян Николаев космонавт амăшĕ — Анна Алексеевна Алексеева пулчĕ. Вăл хăй мăшăрĕн Григорий Николаевичăн йăмăкне — Елизаветăна пульницăна леçме килчĕ. Эпĕ космонавт амăшне курас тесе тахçанах çунаттăм.

— Анна Алексеевна, эпĕ Андриян Николаев çинчен поэма çырнăччĕ. Ăна ман сире вуласа парас килет. Итлеме вăхăт тупаймăр-ши? — терĕм ăна.

— Ма итлес мар, итлес. Çырни кунтах-и вара, — терĕ Анна Алексеевна. Эпир пĕр пушă пÿлĕме кĕтĕмĕр. Эпĕ поэмăна вулама пуçларăм. Анна Алексеевна ăна итлерĕ.

— Питĕ тĕрĕс, лайăх çырнă. Ку поэмăна эсĕ мана тетрадь çине çырса параймăн-ши? — терĕ вăл. Эпĕ ăна поэма хам çырнă сăвăсен кĕнекинче тухасси çинчен пĕлтертĕм, кĕнеке тухсанах ярса пама пултăм. Анна Алексеевна Андриянăн пурнăçĕ çинчен чылай каларĕ...

1963 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 28-МĔШĔ. Çаплах республикăри пульницăра выртатăп. Пирĕнпе пĕрле Шуршăл çынни, виççĕмĕш космонавтăн Андриян Николаевăн аппăшĕ Елизавета Николаевна сывалать. Вăл паян çав тери савăннă: Андриян Николаев Шупашкара килнĕ-мĕн.

Елизавета Николаевна мана тĕл пулчĕ те:

— Андриян пирĕн пата кĕрсе тухмасăр каймĕ-ха. Вăл мана мĕн пĕчĕкренех хисеплетчĕ, юрататчĕ,— терĕ.

Каç пулас умĕн, чăнах та, пульница умне пĕр çăмăл автомашина пырса тăчĕ. Машинăран Андриян Николаевпа Иван пиччĕшĕ тухрĕç. Пульницăра выртакансем мухтавлă янташа чун-чĕререн хисеплесе кĕтсе илчĕç. Кашниех ырă сăмах каласа саламлать, паттăр улăпа телейлĕ кунçул сунать.

Космонавт Елизавета аппăшĕпе чылайччен калаçса ларчĕ.

— Чĕрĕлме тăрăш, врачсем мĕн каланине йăлтах пурнăçласа пыр. Сывлăх пурнăçра темрен те хаклă, — терĕ Андриян Григорьевич аппăшне.

Эпĕ летчик-космонавта хамăн «Чеменпе Мерчен» кĕнекене парнелерĕм. Вăл уншăн аллăма ăшшăн тытса чăмăртарĕ.

— Сана ку парнÿшĕн тавтапуç, — терĕ. Космонавт манпа калаçма та вăхăт тупрĕ, юлашкинчен:

— Часрах чĕрĕлĕр, урăх ан чирлĕр,—терĕ.

Николаев пульницăра выртакан чылай çынсене асăнмалăх автографсем хăварчĕ. Пирĕнпе пĕрле выртакан Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисткисем Татьяна Николаевна Петрова хăйне космонавт автограф парсан чăтаймарĕ, куççулĕпех макăрса ячĕ.

— Эпĕ хурланса мар, савăннипе макăратăп. Андриян Николаев — чăваш халăхĕн мухтавĕ çеç мар. Вăл — пĕтĕм тĕнче паттăрĕ! — терĕ.

1966 ÇУЛХИ ДЕКАБРĔН 28-МĔШĔ. Эпĕ Андриян Григорьевич Николаев космонавта халалласа «Шуршăл каччи» поэма çырнăччĕ. Вăл шкул ачисем валли кăларнă кĕнекере те пичетленсе тухрĕ. Поэмăна Мускава, Андриян Григорьевича хăйне вуласа пăхма, ярса панăччĕ. Паян вара унтан çыру илтĕм.

«Многоуважаемый Давыдов-Анатри, — тесе çырать Андриян Григорьевич. — Я внимательно прочел Вашу лирическую поэму, которая написана о моем детстве.

Мне кажется, что Вы много потрудились над этой поэмой и Вам удалось написать неплохо.

Поэма мне понравилась, но, мне кажется, было бы еще лучше, если бы меньше было упомянуто мое имя.

От души желаю Вам больших творческих успехов, здоровья и большого счастья в жизни.

А. Николаев. 15.12.66 г.»

Тавтапуç çырăвушăн, Андриян Григорьевич! Эпир санпа тивĕçлипе мухтанатпăр.